Муркаш район хаçачĕ

Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

24 (7557) № ✻ Шăмат кун, 2008 çулхи мартăн (пуш) 29-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Культура ĕçченĕсене чысларĕç

КУЛЬТУРА СФЕРИН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМ, КУЛЬТУРА ĔÇĔН ВЕТЕРАНĔСЕМ!

Сире хăвăрăн професси уявĕпе чунчĕререн саламлатăп. Раççей Федерацийĕн Президенчĕн Указĕпе кăçал ăна пĕрремĕш хут паллă турăмăр. Çакă хăех сирĕн пархатарлă ĕçĕре пысăка хурса хакланине кăтартса парать. Эсир хамăр халăхăн культурине, ырă йăлине сыхласа хăварса малалла аталантарас, районта пурăнакансем пушă вăхăта усăллă ирттерччĕр тесе ырми-канми тăрăшатăр. Çынсен ăс-хакăлне аталантарассинче, çитĕнекен ăрава воспитани парассинче сирĕн ĕçĕр çав тери пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Юлашки çулсенче районти культура учрежденийĕсем хăйсен ĕçне палăрмаллах лайăхлатрĕç. Паян 30 тĕслĕхлĕ библиотека халăхăн чун туртнă вырăнĕ пулса тăчĕ. Халĕ районта культура çурчĕсене тĕслĕхлĕ туса хурассипе ĕçсем пуçланнă. Пĕрремĕш çакнашкал культура учрежденине кăçал Республика кунне Кашмашра уçма палăртнă. Республика кунне кăçал Муркашра ирттерме йышăнни пире чыс кӳнипе пĕрлех пирĕншĕн пысăк яваплăх та. Çав шутра – культура ĕçченĕсемшĕн те, мĕншĕн тесен чăваш халăх культурине Раççей тата тĕнче шайĕнче пирĕн пĕрле кăтартмалла.

Эсир малашне те хăвăрăн тивĕçĕре чун-чĕре хушнă пек пурнăçласса шансах тăратăп. Пурне те çăмăл мар ĕçре пысăк çитĕнӳсем тума ырлăх-сывлăх, телей сунатăп, çемйĕрсенче яланах килĕшӳпе тату пурнăç хуçалантăр. Пултарулăхпа ĕçшĕн çунса тăни сирĕнте пĕрре те ан иксĕлтĕр.

Район пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.

Кăçалхи мартăн 25-мĕшĕнче Культура ĕçченĕсен кунне çĕршывра пĕрремĕш хут паллă турĕç. Çак куна халаллăнă районти культура ĕçченĕсен «Çынсемшĕн ĕçлемелле» форумĕ кĕçнерни кун Муркашри ял тăрăхĕсем хушшинчи Культура çуртĕнче иртрĕ. Ветерансем çамрăк вăхăта аса илчĕç.

Сăн ӳкерчĕкре: уяври самант.

Правительствăра

«Уçман çереме» кам уçĕ?

Пуш уйăхĕн 22-мĕшĕнче, Правительство çурчĕн Пĕчĕк залĕнче, район-хула пуçлăхĕсен Канашĕн тата Чăваш Республикин Президенчĕ çумĕнчи приоритетлă наци проекчĕсене пурнăçлас енĕпе ĕçлекен Канашăн пĕрлехи ларăвĕ иртрĕ. Ана Николай Федоров Президент ертсе пычĕ.

Пĕрлехи лару «АПК аталанăвĕ» наци проекчĕ мĕнле пурнăçланнине, ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ пушă выртакан çĕрсене çаврăнăша кĕртессипе республикăра мĕнле ĕçленине, «Раççей гражданĕсене – туянма май пур тата хăтлă хваттерпе тивĕçтересси», экологи хăрушсăрлăхĕ туса хурасси, йăлара пухăнакан каяшсене сиенсĕрлетесси çинчен тата ытти ыйтăва пăхса тухрĕ.

– Кун йĕркине кĕртнĕ ыйтусем пысăк пĕлтерĕшлĕ, вĕсем республикăра пурăнакан кашни çынна тӳррамĕнех пырса тивеççĕ, – терĕ Президент. – Ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсене çаврăнăша кĕртни ял хуçалăх продукцийĕн пахалăхĕпе тата продукци хакĕпе, çынсем çĕрпе мĕнлерех усă курнипе çыхăннă, пурăнмалли хваттер нумайрах тăвасси çурт-йĕр комбинатне анлăлатнинчен, унăн хăватне ӳстернинчен килет. Экологи хăрушсăрлăхĕ туса хуни тавралăха тирпейлĕ тытма, çынсен пурнăçне лайăхлатма май парĕ.

ЧР ял хуçалăх министрĕ Михаил Игнатьев республика агропромышленноç комплексĕнче приоритетлă наци проектне мĕнле пурнăçлани çинчен каласа пачĕ. Кăçал ял хуçалăхĕнче ял хуçалăх продукцийĕн индексĕ пĕлтĕрхи çак вăхăтрипе танлаштарсан 104,9 процент пулнă, аш-какай туса илесси (чĕрĕ виçепе) 12,7 процент ӳснĕ. Сĕт туса илесси 102,1 процентпа танлашнă. Шел те, министр пĕлтернĕ тăрăх, кăçалхи кăрлачăн 1-мĕшĕ тĕлне сăвакан ĕнесен йышĕ 1,2 процент, сыснасен йышĕ 9 процент чакнă.

Республикăра уйрăм çын тытакан хушма хуçалăхсен 14,6 проценчĕ патшалăхран çăмăллăх кредит илнĕ.

Ларура ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсене çаврăнăша кĕртсе ĕçре пысăк çитменлĕхсем пуррине палăртрĕç.

Президент çакăн пек çирĕп тĕллев палăртрĕ – кăçал республикăра 50 пин гектартан кая мар çĕр лаптăкне çĕнĕрен çаврăнăша кĕртмелле.

Строительство министрĕ Александр Гончаров «Раççей гражданĕсене – туянма май пур тата хăтлă хваттер» наци проекчĕ мĕнле пурнăçланнипе паллаштарчĕ. Пĕлтĕр Чăваш Енре 1 миллион та 4,3 пин тăваткал метр хваттер тунă, ку 2006 çулхипе танлаштарсан – 117,5 процент. Уйрăм çынсен вăйĕпе 684,4 пин тăваткал метр çурт-йĕр тунă (пĕтĕм лаптăкăн 68 проценчĕ).

Экологи хăрушсăрлăхĕ çинчен ыйту сӳтсе явнă чухне Президент çакна палăртрĕ: хытă каяшсене ирĕке тĕлли-паллисĕр кăларса пăрахаканнинчен тĕрĕслев органĕсен çирĕпрех ыйтмалла.

Акци

«Çамрăксем сывă пурнăç йĕркишĕн»

Йăлана кĕнĕ тăрăх, ытти шкулсенчи пекех, пирĕн шкулта та пуш уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçанса ака уйăхĕ вĕçленичченех «Çамрăксем сывă пурнăç йĕркишĕн» акци пырать. Çак хĕрӳ тапхăрта вара ачасемпе тĕрлĕрен интереслĕ мероприятисем сахал мар ирттеретпĕр. Класс ертӳçисем сывлăх темипе классенче калаçусем тăтăшах ирттереççĕ, ачасен сывă пуласлăхĕшĕн тăрăшаççĕ. Ачасемпе пĕрлех ашшĕ-амăшĕсене те тĕрлĕрен конкурссене хутшăнтарма тăрăшатпăр.

Нумаях пулмасть шкулта «Атте, анне тата эпĕ – спортпа туслă çемье» конкурс ирттертĕмĕр. Унта кĕçĕн классенче вĕренекенсем хăйсен ашшĕ-амăшĕсемпе хаваспах хутшăнчĕç.Тойкилтĕ ялĕнчен 4 çемье пулчĕ: Федоровсем, Васильевсем, Сергеевсем (çемье пуçĕ шкул директорĕнче вăй хурать), Саватеевсем, Мăн Шаптак ялĕнчен Петряковсем, Мăн Токшик ялĕнчен Ивановсем, Емельяновсем, Малиновкăран Никольскисем.

Пултаруллă çемье командисем пĕр-пĕринпе нумай интереслĕ вăйăсенче ăмăртрĕç. Эстафета пурне те кăмăла кайрĕ.

Юлашкинчен вара жюри çĕнтерӳçĕсене палăртрĕ. 1-мĕш вырăна Ивановсем тухма пултарчĕç, 2-мĕшпе 3-мĕш вырăнсенче – Емельяновсемпе Васильевсем. Çĕнтерӳçĕсем çеç мар, пурте грамотăсемпе парнесене тивĕçрĕç.

Çемьесене пысăк тав сăмахĕ калас килет. Сывă çемьесем çулран çул йышланса пырасса шанас килет.

А. ЯРУТКОВА,
Тойкилтĕ шкулĕнчи директорăн воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕ.

Юбилей



Саламлатпăр

Юратнă мăшăра, аттене, кукаçине – Якаткасси ялĕнче пурăнакан **Николай Яковлевич КОЛОСЬЕВА** 55 çул тултарнă ятпа пĕтĕм чĕререн саламлатпăр. Ырлăх-сывлăх, телей, вăрăм кун-çул сунатпăр.

Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, икĕ хĕрĕ, ывăлĕ, кĕрӳшĕсем, 4 мăнукĕ, тăванĕсем.

Çырăнтару – 2008

«Çĕнтерӳ ялавне» - йӳнĕ хакпа

Апрельтен район хаçатне çырăнмалли хак палăрмалла ӳсет. Унччен ăна пĕлтĕрхи хакпа çырăнтараççĕ.

Çак кунсенче «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата çырăнса илме васкăр. 6 уйăха çырăнмалли хак – 169 тенкĕ те 62 пус.

«Чăваш пичет» киоскĕсенче те райхаçата апрельччен йӳнĕ хакпа çырăнтараççĕ.

Сирĕн ыйтусем çине хуравлатпăр

Вĕрентӳ ĕçĕ çĕнĕ шая çĕклентĕр

Район хаçачĕн вулаканĕсен ыйтăвĕсем çине район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн пуçлăхĕ Леонид Иванович МОЧАЛОВ хуравлама килĕшни пирки пĕлтернĕччĕ. Шутланă пекех, тĕрлĕ ыйтусем сахал мар пухăнчĕç. Районта «Вĕрентӳ» пысăк пĕлтерĕшлĕ наци проекчĕ епле пурнăçа кĕрсе пыни, вĕрентӳпе воспитани ĕçне пахалăхлă çĕнĕ шая çĕклесси чылайăшне интереслентерет. Ытти ыйтусем те çук мар. Паян вара сире Л.И. МОЧАЛОВ ыйтусем çине панă хуравсемпе паллаштаратпăр. Çавна та аса илтеретпĕр, районти вĕрентӳ ĕçне-хĕлне лайăхлатассипе çыхăннă ыйтусемпе сĕнӳсене сирĕнтен малашне те кĕтетпĕр.

– Кашмаш тата Панкли шкулĕсен шăпи пирки мĕн калама пултаратăр?

– Тӳрех çавна каласа хăварасшăн. Вĕсене хупасси пирки ыйту тăмасть. Халĕ Кашмашри тата Панклири пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсене тумалли проекттпа смета документацине хатĕрлессипе çыхăннă ĕçсем пыраççĕ.

– Шкулсене уйăрса паракан «Шкул автобусĕсен» усă курмалли тапхăрĕ мĕн вăхăт? Вăхăт тухсан вĕсене çĕнĕ автобуссемпе тивĕçтерĕç-и?

– Шкулсене уйăрса паракан автобуссемпе усă курмалли вăхăт 7 çулпа танлашать. Çĕнĕ «Шкул автобусĕ» уйăрса пама вĕрентӳ учрежденийĕн учредителĕ, урăхла каласан, район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕ Чăваш Республикин Вĕрентӳ тата çамрăксен политикин министерствине заявка тăратать. Министерство çумĕнче йĕркеленĕ комисси вырăна тухса транспорт хатĕрĕн техника шайне хак парать, автобуса улăштарасси пирки йышăну тăвать, кирлĕ документсене хатĕрлет.

– Пĕрлехи патшалăх экзаменĕсене тытассинче кăçал улшăнусем пур теççĕ. Мĕнле улшăнусем пирки сăмах пырать-ши?

– 2001 çултан тытăнса районти пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулсем 11-мĕш класран вĕренсе тухакансене тĕрĕслев мелĕпе патшалăх аттестацине пĕрлехи патшалăх экзаменĕн мелĕпе тыттарасси енĕпе ирттерекен эксперимента хутшăнаççĕ. **(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).**

Шыв ыйтăвĕ тавра

Пăхса тăракан çук

Чуманкасси ял тăрăхĕн территорийĕнче шывпа усă курнăшăн çуллен укçа тӳлессинче тивĕçлĕ йĕрке пулман, халĕ те ку çаплах. Вырăнти влаç полномочийĕсене ял тăрăхĕсене парсан малашне шыв башнисене, шыв пăрăхĕсене пăхса тăрассине ял тăрăхĕсене парасси пирки калаçкаларĕç. Районти хăш-пĕр ял тăрăхĕсенче çапла турĕç те. Анчах та пирĕн патра улшăну пулмарĕ. Шывпа усă курнăшăн та укçине мĕне пăхса илни паллă мар.

Акă эпĕ Якаткасси ялĕнче пурăнатăп. Иртнĕ çул 2006 çулта шывпа усă курнăшăн хуçалăх мĕншĕн ун чухлĕ укçа сăптăрать тесе правление кайса калаçнă хыççăн кăçал манăнне иртнĕ çулшăн 203 тенкĕ тӳлемелле тунă, çавăн чухлĕ тӳлемелле пирки извещени ярса пачĕç. Çав вăхăтрах вара ялта хăшĕ-пĕрин шывшăн тӳлемелли виçе 1230 тенкĕпе танлашаканни те пур.

Шыв колонкисене никам та юсаса памасть. Хамăрăн пĕрлехи вăйпах юсама тивет. Çавăнпа та шывпа усă курнăшăн тӳлессинче пĕрлехи расценка хăçан пулĕши?

В. ГОРДЕЕВ, депутатсен Чуманкасси ял тăрăхĕнчи Пухăвĕн депутачĕ.

Ял çыннисене мĕн пăшăрхантарать

«Сĕте ăçта чикмелле?»

Килти хуçалăхра ĕне усраса сĕт укçалла сутакан çынсенчен чылайăшне чăннипех те пăшăрхантарать çак ыйту паян. Пĕрремĕшĕнчен, сĕте сутăн илмелли хакĕ тăрук чакса кайрĕ. Нумаях пулмасть ăна килограмне 12 тенкĕпе йышăннă пулсан, халĕ сутăн илмелли хак 7–8 тенкĕрен ытла мар. Çитменнине чылай çĕрте ку хакпа та продукцие вырнаçтарассипе йывăрлăхсем пур. Ялти чылай çыншăн сĕт сутса укçа тăвасси пысăк тĕкĕ пулнăччĕ пулсан, халĕ ун çине шанма пăрахма тивет-и? Çав вăхăтрах магазинсенче сĕт продукчĕсен сутлăх хакĕ чакни курăнмасть.

Район ертӳçисене, ответлă çынсене те кун пек лару-тăру канăççăрлантармасăр тăма пултаймасть. Ку ыйтупа вĕсемпе канашлани те çавнах çирĕплетет. Мĕншĕн тесен республикипе туса илнĕ сĕтĕн саккăрмĕш пайĕ ытла Муркаш районĕ çине тивет вĕт-ха. Иртнĕ çул ăна ял хуçалăх предприятийĕсем кăна 11150 тонна хатĕрлесе панă. Республикипе чи пысăк кăтарту. Анчах паян-ыранах ырă еннелле улшăнусем пуласса никамах та шантарса калаймасть. Сăлтавĕсене çӳлтерехри шайра шырамалла пулас.

Районта хуçалăхсенчен тата уйрăм çынсенчен сĕт сутăн илессипе Муркашри сĕт-çу завочĕ, чикĕллĕ яваплăхлă «Вита» (Юнкăра вырнаçнă) тата «Милград» («Ударник» хуçалăх территорийĕнче) обществăсем ĕçлеççĕ. «Витăран» пĕлтернĕ тăрăх, кунта сĕт сутăн илессине чакарман, унччен пекех йышăнаççĕ. Продукцие Мари Республикинчи Звениговăна ăсатаççĕ. Анчах та хаксем... унччен мар ĕнтĕ, ытти çĕрти пекех. Мĕнреха сăлтавĕ?

Пĕр енчен çак продукцие сутса укçа туса илме май пуррине çынсенчен ытларахăшĕ ăнланса илни, сĕт суса илесси хушма хуçалăхсенче ӳсни палăрать. Анчах тĕп сăлтавĕ вара кунта тесе калаймăн.

Муркашри сĕт-çу завочĕн директорĕ В.А. Калинин ăнлантарса панă тăрăх, сĕт сутăн илессине чакармасăр ниепле те май çук. Ял хуçалăх предприятийĕсем хальхи вăхăтра кунсерен 30 тоннăран кая мар продукци ăсатма хатĕр. Хушма хуçалăхсенче унран та ытларах туса илеççĕ. Продукцие гарантиллĕ майпа туянакансем валли вара завод ăна 35 тоннăран ытла хатĕрлеймест.

Сĕт ытларах пулни малтан та пулман мар. Анчах тăпăрчă хатĕрлени йывăрлăхран тухма май панă. Ăна валли сĕтĕн чылай пайĕ кайнă. Тăпăрчăна Мускаври продукци тирпейлекенсем туянса тăнă. Тăрук вара вĕсем ăна туянма пăрахнă. 25 тонна продукцие Шупашкарти хладокомбинат морозильникĕсене хума тивнĕ. Тăпăрчă тума чарăннă.

Мускаври продукци туянакансем продукцие унччен хакпа туянни тупăшлă маррине пĕлтереççĕ. Раççей сĕт рынокĕнче лару-тăру тĕпрен улшăннă. Беларусь Республики çĕршывран сутакан çут çанталăк газĕшĕн хăйĕн йӳнĕ тăракан типĕтнĕ сĕчĕпе саплаштарма тытăннă иккен. Паллă ĕнтĕ, хамăр çĕршыври ку продукцие туса хатĕрлекенсем чĕр тавара сахалрах туянма тытăннă. Сутăн илмелли хаксем те чакаççĕ.

Республикăра сĕт продукчĕсем хатĕрлессипе пĕр предприяти кăна ĕçлемест пулин те, специалистсем шутланă тăрăх, монополизм сĕмĕ те палăрать. Ку вăл анлă федераллă системăпа çыхăннă компание кĕрекен пĕр пысăк предприятирен килет. Çак заводăн йӳнĕ продукципе – типĕтнĕ сĕтпе анлăн усă курса продукци хатĕрлеме майсем ытларах пулнă пирки ыттисен сутăн илнĕ сĕтрен продукци хатĕрлесси тупăшсăр пулса тăрать. Çавна май сĕт сутăн илмелли хаксене палăрмаллах ӳстерме те, чакарма та майсем пур.

Халĕ вара çапла пулса тухать. Хресченсем продукцие йӳнĕрех те йӳнĕрех сутаççĕ, магазинсенче вара хаксем улшăнмаççĕ. Улшăнасса шанма та йывăр. Сĕт сутăн илмелли хаксене тăрук хăпартнин шăв-шавĕ сĕт бизнесĕн лидерĕсене ваккăн сутмалли хаксене палăрмаллах ӳстерме кăна кирлĕ пулнă пулас.

Ыйтусем вара юлаççĕ. Сутăн илмелли хаксем ӳссе пырасса шанса хуçалăхсем те, уйрăм çынсем те сахал мар кредитсем илнĕ вĕт-ха. Мĕнпе тӳлесе татма тивĕ вĕсене? Статистика вара çапла: сумалли ĕнесен шучĕ ял хуçалăх предприятийĕсенче те, хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче те, уйрăм çынсен хушма хуçалăхĕсенче те, апла пулсан пĕтĕмĕшле сĕт сăвасси те чакса пыраççĕ.

В. ШАПОШНИКОВ.